# ИОСИФ ГРИШАШВИЛИ

*Грузи*

## МАРИДЖАНА

Вилсессĕнех — пире хура çĕр хуплĕ.
Мĕн тăвăн-ха? Кун-çул йĕрки çапла!
Пуш-пушă куçсене сĕм тĕттĕм тулĕ,
Калаçмĕç çăварсем сăвăпала.

Яш чух эпир мĕне савни мĕнпурĕ —
Сан куçусем те, манăн мăйăх та —
Масар çине пытарăнĕ, çĕр пулĕ:
Мĕнпурĕ пăхăнатпăр вăхăта.

Пулин! Çапах та шухăшпа çуталнă
Сăмах усранатех кĕнекере.
Пурне те çырнă. Пĕтĕмпех калана.
Çапах аса илкелĕç, тен, пире.

Ан тив, вăл вилĕмĕн çави çĕр тăрăх
Касса çӳретĕр тутлă пурнăçа.
Çĕре ӳксе хупланнă тутă вăрлăх
Калле шăтса тухмасть-им? Çавă çав!